27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАЙ
9
ЫТЛАРИКУН
91(6586) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Выльăх апачĕн базине лайăхлатассишĕн

Выльăх апачĕсен базине тăвасси выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинчен юлса пыни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе нумай чăрмантарать. Пирĕн республикăра курăксем акса, çулса илесси 1942 çултанпа çулран-çулах чакса пынă. Нумай çул хушши ÿсекен курăксем акса тăвас ĕçре агротехника правилисене нумай колхозсенче пăснă, çĕре удобренисемпе çемĕçтермен, курăксем акнă лаптăксене çумкурăкĕсенчен тасатман. Нумай çул хушши ÿсекен курăксен шутĕнчен тимофеевкăна юлашки çулсенче акма пăрахнă. Çавăн пирки курăксем сайралса юлнă, хирти пусуçаврăнăшĕнче курăк акнă лаптăксем пĕчĕкленнĕ. Çакă вара, нумай çул хушши ÿсекен курăксен тухăçлăхне чакарнипе пĕрлех, çĕре начарлатасси патне илсе пынă.

Çарансемпе выльăх çÿремелли вырăнсене те кирлĕ пек пăхман. Çарансене çумкурăкĕ пусса илнĕ е вĕсем шурлăхсем пулса кайнă. Çавăн пирки республикăра, утă-улăм хисепĕнче утă 25 процент кăна йышăнать. Хăшпĕр районсенче çак процент татах та пĕчĕкрех. Елчĕк районĕнче, сăмахран, 3 процент, Чкаловски районра 10 процент, Красноармейски районра 16 процент çеç йышăнать.

Нумай çул хушши ÿсекен курăксен лаптăкĕ чакнин, вĕсене акмалли плансене çулран-çулах пурнăçламаннин сăлтавĕ райисполкомсем, ВКП(б) райкомĕсем, çĕрĕç органĕсем тата колхозсен правленийĕсем курăк вăрлăхне ĕрчетес ĕç çине сÿрĕккĕн тата хакламасăр пăхнинчен килнĕ. Нумай районсенче кĕтÿ кĕтмелли вырăнсенче курăксен вăррисем туса илессине япăха кăларнă. Хай тĕллĕн ÿсекен курăксен вăррисене пухман, çарансемпе кĕтÿ кĕтмелли вырăнсене лайăхлатассишĕн çителĕклĕ кĕрешмен.

Нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат-çимĕç хатĕрлес енĕпе сÿрĕк ĕçлеççĕ. Чылай колхозсенче выльăх валли тымарçимĕç, çĕрулми, ешĕллĕ çитерме вика тата силос тумалли культурăсем çителĕклĕ акмаççĕ. Е тата силоса ячĕшĕн çеç хываççĕ, çавăн пирки силос час-часах пăсăлса юрăхсăра тухнă. Выльăхсене çитерме йывăç турачĕсем тата йĕкел хатĕрлес ĕçе те кирлĕ пек тумаи.

Чылай колхозсенче выльăхсене çитермелли утă-улăмсене хатĕрлес ĕçе кирлĕ пек организацилемен, зоотехниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсем ку тĕлĕшпе колхозсене çителĕксĕр пулăшса пынă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пымашкăн выльăх апачĕн базине тĕпренех лайăхлатас пулать. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак кунсенче республикăри колхозсенче выльăх апачĕн базине лайăхлатмалли мероприятисем çинчен ятарласа постановлени йышăннă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн, райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсен çав постановленири мероприятисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла.

Курăксене пусуçаврăнăш планĕнче кăтартнă пĕтĕм лаптăк çинче акса тăвас пулать. Клевер, люцерна тата нумай çул хушши ÿсекен ытти курăксене агротехника кăтартнă вăхăтра акмалла, çĕре удобренисем тăкса çемçетмелле, агротехника мероприятийĕсене тĕрĕс пурнăçласа пымалла, малтанхи çул акнă курăксен лаптăкĕсем çинче выльăхсене çÿретмелле мар.

Нумай çул хушши ÿсекен курăксене акса, пăхса çитĕнтерме тата пухса илме уйхир бригадисенчи опытлă колхозниксене уйăрмалла, вĕсене инвентарьпе туртăм вăйĕ çителĕклĕ таранах памалла.

Выльăх-чĕрлĕх апачĕн базине тума пирĕн республикăри кашни районпа колхозăн лайăх майсем пур. Елчĕк, Шăмăршă, Чкаловски, Улатăр, Пăрачкав, Куванкино, Вăрмар тата ытти районсенчи колхозсенче люцерна лайăхах ÿсет çитĕнет. Вĕсенче люцерна акма çĕнĕрен пуçăнмалла. Люцернăна пĕрчĕллĕ курăксемпе, тимофеевкăпа т. ыт. те хутшăнтарса акмалла. Пур районсенчи колхозсем те çитес 2—3 çул хушшинче 2—3 гектартан кая мар люцерна акса тума пултараççĕ, тумалла та.

Нумай çул хушши ÿсекен курăксен вăрлăхĕсене туса илес ĕçе лайăхлатмалла. Пирĕн республикăри кашни колхоз хăйне кирлĕ таран тата государствăна памалăх та клевер, люцерна, тимофеевка вăрлăхĕ туса илме пултарать. Çавăнпа кашни колхозрах нумай çул хушши ÿсекен курăксен вăрлăх участокĕсене тумалла, вĕсене звеносем çумне çирĕплетмелле, вăрлăх тăвас ĕçе ертсе пыма колхоз правлени членне хушмалла. Колхоз правленийĕсен агрономсемпе пĕрле вăрлăх участокĕсене пăхса усрамалли мероприятисене туса хатĕрлемелле.

Вăрлăхсен тухăçне хăпартас шутпа, клеверпа люцерна пуç кăларнă вăхăтра вăрлăх участокĕсене иртерех, июнĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр, çулса илмелле тата вăрлăх участокĕсем çине хурт-хăмăр кăларса лартмалла. Кăçал пирĕн республикăра вăрлăх валли 5.000 гектар клеверпа люцернăна çулса илмелле. Тимофеевка акнă участоксене халех шута илсе, унăн вăрлăхне кăçал ăнăçлă пухмалла. Кăçалтан пуçласа çулсеренех 1.500 гектартан кая мар çĕр çинче тимофеевка вăрлăхĕ çитĕнтермелле.

Вăрлăх туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен районсенчи райисполкомсен, ВКП(б) райкомĕсен, районри çĕрĕç пайĕсен лайăх сорт акса тухăçлă курăк вăрлăхĕсем туса илме вăл енĕпе ĕçлеме пысăк опыт пухнă колхозсене уйăрмалла.

Кăçал çĕрулмипе тымарçимĕç акмалли плана пĕр пăркаланмасăр пурнăçламалла. Вăрлăх çителĕклĕ мар çĕрте вĕсене колхозниксенчен сутăн е кивçен илмелле, колхозсем хушшинче пĕрне-пĕри кивçен е сутăн парассине организацилемелле. Апат çимĕçĕ е выльăх апатне каякан çĕрулми тăррисене касса пухмалла.

Кашни колхозрах выльăх-чĕрлĕх фермисен çумĕнче 3—5 гектар таран çĕрулми тата тымарçимĕç лартма çĕр уйăрса хумалла. Унтан пухса илнĕ çĕрулмипе тымарçимĕçсене йăлтах обществăлла выльăх-чĕрлĕхе çитермелле. Çав участоксем çинче фермăра выльăх пăхакансен ĕçлемелле. Усă курман çĕрсем çинче планран ирттерсе çуллахи вăхăтра сăвакан ĕнесене çитермешкĕн сĕлĕпе вика хутăштарса акмалла.

Тымарçимĕçсене вăхăтра çумламалла, ретсем хушшине виçĕ хутран кая мар çемçетмелле, тислĕк шĕвекĕпе икĕ хутран кая мар апатлантармалла тата ытти удобренисем те памалла. Тымарçимĕç вăрлăхĕсене кашни колхозрах тумалла.

Колхозсем силос валли культурăсем акса тăвассине пурнăçламанни тата силоса хăй тĕллĕн ÿсекен курăксене анчах хывни кăçал пачах та пулмалла мар. Силос валли курăксем плана палăртнă чухлех акмалла. Колхозсенче кашни ĕне пуçне 30 центнертан кая мар, майракаллă çамрăк выльăх валли 4 центнер, сысна ами валли 10 центнертан кая мар силос хывмалла. Пур колхозсенче те силос хывма лайăхлатнă траншейăсем, шăтăксем тата çурма башнĕсем тумалла. Çак шутпа июнĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр колхозсемпе МТС-сенчи силос тата улăм туракан мĕнпур машинăсене юсаса хатĕрлемелле.

Колхоз правленийĕсен пур çарансене те уйхир бригадисемпе звеносем çумне çирĕплетмелле.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсен ялхуçалăх специалисчĕсене колхозсенчи çарансемпе кĕтÿ кĕтмелли вырăнсене тĕрĕслесе тухас ĕçе явăçтармалла. Вĕсен, колхоз правленийĕсемпе пĕрле, çитес пĕр-ик çул хушшинче тумалли мероприятисене йышăнмалла.

Çаранпа кĕтÿ вырăнне акмалли курăк вăррисем тумашкăн Çĕрпÿ тата Елчĕк районĕсенче вăрлăх туса илекен колхозсенчи ĕçе кăçал çĕнĕрен пуçарса ямалла. Кашни колхозрах лайăх курăк çитĕнекен çарансем çинче хăй тĕллĕн ÿсекен курăк вăррисем туса илме 1—2 гектар уйăрса хумалла. Хăй тĕллĕн ÿсекен лайăх курăксен вăррисене пухма шкул ачисене явăçтармалла.

Вăрмалла районсенчи колхозсенче кăçал июньпе июль уйăхĕсенче кашни 10 сурăх пуçне пĕр лавран кая мар йывăç турачĕ хатĕрлемелле. Сыснасем валли кĕркунне йĕкел пухмалла.

Республикăри чылай колхозсенче, пуринчен ытла, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Куванкино, Хĕрлĕ Чутай тата Улатăр районĕсенче колхоз çаранĕсене унта-кунта салатнă тĕслĕхсем пулнă. Ку пысăк çитменлĕхе пĕтермелле. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсен обществăлла çĕрĕсене салатассинчен сыхлас мерăсем» çинчен йышăннă постановление пурнăçа кĕртсе, колхоз çаранĕсене салатакан çынсене суда памалла.

Выльăх-чĕрлĕх апачĕн базине тăвасси — вăйлă тырпул никĕсне ăнăçлăн хывни пекех питĕ ответлă ĕç. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ выльăх-чĕрлĕх апачĕн базине лайăхлатмалли мерăсем çинчен йышăннă постановление пурнăçлассишĕн большевикла кĕрешĕр! Республикăри йышлăн ĕрчесе пыракан выльăх-чĕрлĕхе çитермелли апатсен шанчăклă базине тăвар!

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказне кĕнеке туса кăларнă

Политика литературин Государство Издательстви Верховный Главнокомандующин Совет Союзĕн Маршалĕн Сталин юлташăн Майăн 1 мĕшĕ ячĕпе панă приказне уйрăм кĕнеке туса, пичетлесе кăларнă.

Çак кĕнеке пĕтĕмпе 5 миллион экземпляр тухать. (ТАСС).

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне илмесĕр пĕр ĕççынни те ан юлтăр!

Бюджетпа пăхнинчен ытларах сарнă

СОВЕТСКОЕ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерÿ тума, — çакăн пек лозунгпа иртсе пырать Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне сарас ĕç пирĕн районра. Малтанхи кунах çĕнĕ заема, бюджет тăрăх вырăнаçтарма пăхнă хисепрен чылай ытларах сарнă. Юлашки икĕ кун хушшинче çав цыфра татах ÿсрĕ.

Заем сарас ĕçре Советски, Сехра, Пакăш ялсовечĕнчи колхозсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Советски ялсовечĕнчи 3 колхоз заем укçине çийĕнчех хыврĕ.

М. ЯКОВЛЕВ.

Икĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ

СĔНТĔР, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). хамăр корр.). Районри предприятисемпе учрежденисенче заем сырăнас ĕç вĕçленсе пырать. Нумай коллективсем Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне сарас ĕçре хайсен пысăк активлăхне кăтартса пачĕç. Пир-авăр фабрикин коллективĕ çĕнĕ заема икĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ, «Волга» промартель коллективĕ икĕ уйăхри ĕç укçинчен те ытларах сырăнса илнĕ. Çавăн пекех «Кожевник» артель коллективĕ те уйăхри ĕç укçинчен нумай ирттернĕ. Вăл заем укçине 10.000 тенкĕ хывнă та ĕнтĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем те кая юлмаççĕ. Сĕнтĕр ялсовечĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 52.000 тенкĕлĕх сырăнса, укçине пĕтĕмпех парса татнă.

Хĕрлĕ Çар офицерĕсен арăмĕсем заем сырăнаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра малта пыракан колхозсемпе колхозниксем çĕнĕ заема нумай пин тенкĕлĕх сырăнса, çийĕнчех укçине хываççĕ. «Волна» колхозра кĕске вăхăтрах 158.775 тенкĕлĕх, «Большевик» колхозра 171.000 тенкĕлĕх, «Мартăн 8-мĕшĕ» колхозра — 105.000 тенкĕлĕх сырăннă, укçине пĕтĕмĕшпех пухнă.

Колхоз председателĕсем пример кăтартаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ В. Костров юлташ 20.000 тенкĕлĕх сырăннă. Çавăн пекех «Наука Ленина» колхоз председателĕ Таланцев — 15.000 тенкĕлĕх, «Коминтерн» колхоз председателĕ Теньков — 15.000 тенкĕлĕх сырăнса укçине пĕтĕмпех тÿленĕ.

Заема вырăнаçтарасси офицерсен арăмĕсем хушшинче те ăнăçлă пырать. Темиçе сехет хушшинчех вĕсем 28.850 тенкĕлĕх заем сырăннă. Совет Союзĕн Геройĕ Мирон Ефимович Ефимов арăмĕ — Надежда Ефимова 5.000 тенкĕлĕх сырăнса 3.000 тенкине çийĕнчех тÿлерĕ.

СССР Наркомфинĕ пĕлтерни

Государствăн 1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнче 25 миллиард тенкĕлĕх кăларнă Виççĕмĕш Военнăй Заемĕ майăн 6-мĕшĕ пĕтнĕ тĕле 25 миллиард та 213 миллион тенкĕлĕх сарăлнă. Çапла ĕнтĕ, заемăн палăртнă сумми ытлашшипех сарăлнă.

Заем сарас ĕç малалла пырать.

СССР Наркомфинĕ А. ЗВЕРЕВ.

1944 çулхи майăн 7-мĕшĕ.

Çĕнĕ заема республикăра 180.581 пин тенкĕлĕх сарнă

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне республикăра майăн 9-мĕшĕ тĕлне 180.581 пин тенкĕлĕх сарнă. Заем укçине 87 миллион тенкĕ яхăн пухнă.

Заем сарас тĕлĕшпе Шупашкар хули, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Шупашкар, Вăрмар, Октябрьски, тата Ишлей районĕсем малта пыраççĕ. Вĕсем пурте заема бюджетпа вырнаçтарма палăртнинчен ытларах сарнă.

Заем укçине пухас тĕлĕшпе Октябрьски тата Вăрмар районĕсем малта пыраççĕ. Вĕсем ялта сарнă заем укçине пĕтĕмпех пухнă.

Заем сарас тĕлĕшпе, малтанхи пекех, Йĕпреç, Улатăр, Пăрачкав районсем тата Улатăр хули юлса пырать. Колхозниксенчен заем укçине пухас енĕпе Куванкино, Йĕпреç, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă районĕсем кайра пыраççĕ.

Çулăмлă патриотсем — пчеловод Якимов 50.000 тенкĕлĕх, колхозник Абрамов 20.000 тенкĕлĕх сырăннă

КÿКЕÇ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне сырăнасси тата унăн укçа тÿлесси районра пысăк активлăхпа пулса пырать. Паянхи кун тĕлне заема 6 миллион та 900 пин тенкĕлĕх сырăнса укçине 5 миллион та 40 пин тенкĕ пухнă.

Заем уйрăмах «Правда», «2-ая пятилетка» колхозсенче хăвăрт сарăлчĕ. «Правда» колхоз членĕсем заем облигацийĕсене 211.000 тенкĕлĕх туянчĕç.

Районри колхозниксемпе колхозницăсем заем сырăннă вăхăтра хайсем тăван çĕршыва пулăшассишĕн, нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çапса аркатассишĕн нимĕ те шеллесе тăманнине яр-уççăн кăтартса пачĕç. Ку ĕçе шкул ачисенчен пуçласа 70—80 çулхи ватăсем таранах хутшăнчĕç. «Чембек» колхозăн пчеловочĕ, 64 çулхи Иван Якимович Якимов çĕнĕ Заема 50.000 тенкĕлĕх сырăнчĕ, укçине çийĕнчех 30.000 тенкĕ хыврĕ. Çав колхозри 87 çулхи колхозник Ефрем Абрамов заема 20.000 тенкĕлĕх сырăнса укçине 10.000 тенкĕ тÿлерĕ.

Заема ĕççыннисем хушшинче вырнаçтарасси пысăк активлăхпа малалла пырать.

Т. ЛОГИНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

50.000 тенкĕлĕх туяннă

КАНАШ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Канаш чиркĕвĕн настоятелĕ священник Димитрий Каминский Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне 50.000 тенкĕлĕх сырăнса, укçине пĕтĕмпех перекет кассине хывнă.

Заем укçине пухассине хăвăртлатас пулать

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Хулари ĕççыннисем тата колхозниксемпе колхозницăсем çĕнĕ заема пысăк çĕкленÿпе туянаççĕ. Майăн 8-мĕшĕ тĕлне районри ĕççыннисем çĕнĕ заема пурĕ 6 миллион та 418 пин тенкĕлĕх сырăннă.

Заем сарасси уйрăмах комбинатра активлă иртсе пырать. Комбинат коллективĕ çĕнĕ заема уйăхри ĕç укçин 134 процентĕ чухлĕ сырăнса илнĕ. Çакăр пĕçерекен комбинатри тата автотранспорт конторинчи работниксем те малти ретре пыраççĕ. Ку ĕçре колхозсем те кая юлмаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çĕнĕ заема темиçе кун хушшинчех 2 миллион та 262 пин тенкĕлĕх сырăнса илнĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ П. Я. Яковлев юлташ 20.000 тенкĕлĕх сырăнса илсе, укçине çийĕнчех хывнă.

Анчах та районра заем укçине пухасси юлса пырать-ха. Ку таранччен пурĕ те 1 миллион та 238 пин тенкĕ кăна пухнă. Ку ĕнтĕ районри партипе совет тата комсомол организацийĕсен тата финанс работникĕсен заем укçине пухас ĕçе татăклăнах хăвăртлатма кирлине кăтартать.

Н. ФОМИНА.

Пысăк çĕкленÿпе

Шупашкарти ĕççыннисем çĕнĕ заема пысăк çĕкленÿпе сырăнаççĕ. Паянхи куна хулара ĕç укçин 148 процентĕ чухлĕ сырăннă. Уйрăм предприятисемпе учрежденисем çак ĕçре пысăк патриотизм кăтартрĕç: ФЗО шкулĕ ĕç укçин 300 процентĕ чухлĕ сырăннă, 10-мĕш номерлĕ ача сачĕ — 250 процент, чухлĕ, Метровес завочĕ — 205 процент, Чăвашторг, Жилуправлени — 200-шер процент, 11-мĕш номерлĕ ача сачĕ — 195 процент, Табак фабрики, Радиокомитет, Гороно — 190-шар процент чухлĕ сырăннă.

Уйрăм урам комитечĕсем лайăх ĕçленине палăртмалла: Ленинградски урам комитечĕ (председателĕ Смирнова юлташ) заема килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче 17.000 тенкĕлĕх, Чувашски урам комитечĕ (председателĕ Яблонко юлташ) — 13.000 тенкĕлĕх сарнă.

20 тракторист 163.000 тенкĕлĕх

ÇĔРПÿ, майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăх работникĕсем çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа сырăнаççĕ. Заем вырнаçтарасси уйрăмах МТС-ри трактористсем хушшинче пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. Темиçе сехет хушшинчех 20 тракторист çĕнĕ заема 163.000 тенкĕлĕх сырăнса илсе, укçине пĕтĕмпех тÿлерĕç.

Заем сарасси «Новая жизнь», «Ударник», Ильич ячĕпе тăракан тата «Красный бригадир» колхозсенче ăнăçлă иртрĕ. Вĕсем заем укçине пĕтĕмпех перекет кассине хывнă.

КĔСКЕН

** КУСЛАВККА. Районри предприятисемпе колхозсенче заем сырăнасси активлăн иртсе пырать. Комбинатри пур цехсен коллективĕсем те çĕнĕ заема уйăхри ĕç укçин 115 процентĕнчен ытларах сырăннă. Сальнов юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ уйăхри ĕç укçин 145 процентĕ чухлĕ сырăннă. «Первая пятилетка» колхозăн председателĕ Артамонов юлташ, «Путь Ленина» колхозăн председателĕ Казаков юлташ çĕнĕ заема 10.000-шер тенкĕлĕх туяннă.

** ВĂРНАР. Районри чылай колхозсем заем сырăнас ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Крупская ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем çĕнĕ заема 169.000 тенкĕлĕх сырăнса, укçине пĕтĕмпе хывнă. Вăл колхозăн председателĕ Русков юлташ 9.000 тенкĕлĕх туяннă.

** ЕТĔРНЕ. Районри ĕççыннисем çĕнĕ заема малтанхи кунах бюджетпа сарма пăхнинчен чылай ытларах сырăнса илчĕç. Халĕ пурне те заем сырăнас ĕçе явăçтарас тата заем укçине пĕтĕмпех пухса çитерес тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕç пырать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 6-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 5-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 62 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТАТА ХУРА ТИНĔС ФЛОЧĔН КАРАПĔСЕМ ТĂШМАН СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Майăн 4-мĕшĕнче кăнтăрла тата майăн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци çапла тăшманăн Хура тинĕсри суднисене пыра-пыра çапнă. Пирĕн авиаци тăшманăн 3.000 тонна таякан транспортне тата хуралта çÿремелли 2 катерне шыва путарнă, тăшманăн ытти 2 транспортне вăйлă сиенленĕ.

Севастопольтен хĕвеланăçнерехри районра Хура тинĕс флочĕн торпедăсем яракан катерĕсем тăшман конвойне аркатса тăкнă. Торпедăсем тÿрех пырса тивнипе пĕтĕмĕшпе 7.000 тоннăна çити таякан 3 транспорта тата 2 хăвăрт çÿрекен десант баржине шыва путарнă.

МАЙĂН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 7-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 14 танкне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери 41 самолет персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТĂШМАНĂН СЕВАСТОПОЛЬ РАЙОНĔНЧИ ÇАРĔСЕМПЕ ТЕХНИКИНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Майăн 6-мĕшĕнче кăнтăрла тата майăн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк соединенийĕсем тăшманăн Севастополь районĕнчи çарĕсемпе техникине тапăннă, бомбăсем пăрахса штурмланă. Нимĕçсемпе румынсен çарĕсем пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсем çине, тăшманăн персе тăмалли хатĕрĕсем çине, оборона сооруженийĕсем çине, складсемпе аэродромсем çине тата тăшманăн Севастополь портĕнче тăракан суднисем çине бомбăсем пăрахнă. Пирĕн авиаци тапăннине пула тăшман пысăк çухатусем тÿснĕ. Артиллери батарейисене нумайĕшне путарса лартнă, 4 боеприпас складне сирпĕнтерсе янă, темиçе суднăна сиенленĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата аэродром çинче нимĕçсен 22 самолетне пăтерсе тăкнă.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман разведкăсем тунă. Пĕр участокра нимĕçсем совет çарĕсем тăракан вырăн патне сывхарма хăтланнă. Миномётсемпе, пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, гитлеровецсене çапаса янă. Тепĕр участокра нимĕçсен пирĕн малти линии патне сывхарса ситнĕ икĕ взводне çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă.

* * *

Яссы хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман хăйĕн пехотипе танксен вăйĕсемпе темиçе хутчен те пирĕн позицисене атакăланă. Нимĕçсем пĕр паха çÿллĕ вырăна туртса илме хăтланнă. Пĕр соединени боецĕсем тăшманăн пур атакисене те ăнăçлăн сирсе янă, нимĕçсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Çÿллĕ вырăн патне пымалли çулсем çинче нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ 11 танкĕ тата хăй тĕллĕн çÿрекен 6 туппи тăрса юлнă.

* * *

Тирасполь хулинчен кăнтăртарахра ирхине ирех нимĕçсен батальонĕ атака пуçласа янă та пирĕн оборонăн малти линине савăлланса кĕнĕ. Кăнтăрла иртсен пирĕн подразделени, контратака туса, тăшмана каялла ывăтса янă та малтанхи вырăна йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 виллине çити выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Украинецсен Волынь облаçĕнче кĕрешекен партизанĕсен отрячĕ нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенире нумай гитлеровец пĕтнĕ. Чугун çулăн çав участокĕнче поездсем çÿресси икĕ кунлăха чарăнса ларнă. Нимĕçсен командованийĕ партизансене хирĕç эсэсовецсен карательнăй отрядне янă. Пирĕн патриотсем, ăста маневрсем туса, тăшманăн темиçе атакине сирсе янă, 70 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем вăра, нимĕнле çитĕнÿ те тăваймасăрах, каялла чакнă. 3 кун иртсен, партизансем тăшманăн фронталла пыракан тата тепĕр çар эшелонне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра Хĕрлĕ Çар енне венгер салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе ушкăнĕ куçнă. Венгерсен 24-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 24-мĕш полкăн 6-мĕш ротин 3-мĕш взвочĕ пĕтĕмĕшпех хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă. Çавăнпа пĕрлех çав полкри ытти подразделенисенчи 18 венгер алăри хĕçпăшала пăрахса тыткăна парăннă. Тыткăна хăй ирĕкĕпе тарса каçнă Бела П. çапла каласа кăтартнă: «Тензо лейтенант 40 салтака пухрĕ те пире организованно тыткăна парăнма сĕнчĕ. Тыткăна парăнас шутпа вырăссен позицийĕсем патне сывăхарса çитнĕ чухне пире нимĕçсем пулеметсемпе пеме пуçларĕç. Эпир выртрăмăр. Нимĕçсем пеме чарăнсан, эпир тĕрĕс-тĕкелех вырăссен окопĕсем патне çитрĕмĕр те тыткăна парăнтăмăр».

Венгерсен 2-мĕш горно-стрелковăй бригадинчи 12-мĕш батальонран тыткăна парăннă ефрейтор Иштван Х. çапла каласа кăтартнă: «Германи Венгрие оккупацилерĕ те унăн никама пăхăнманлăхне таптаса тăкрĕ. Гитлер Венгрие нимĕçсен колонийĕ туса хучĕ. Халĕ вăл, венгер салтакĕсене пинĕ-пинĕпе пĕтерсе, совет çарĕсен Германие кĕрсе каймалли çулĕсене пÿлсе лартасшăн. Венгри правительстви пирĕн çĕршыва сутрĕ. Венгрирен нимĕç оккупанчĕсене хăваласа ярас вырăнне çав правительство пире вырăссемпе вăрçма хушать. Тăван çĕршыва сутакан правительствăна служит тума килĕшменнипе эпĕ май килсенех тыткăна парăнтăм».

* * *

Аяларах фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Винница облаçĕнчи Китайгород ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Икĕ çул ытла эпир нимĕçсен пусмăрĕ айĕнче асапланса пурăнтăмăр. Хайсем пуç пулса тăнă вăхăтра нимĕçсем пирĕн ялти 200 çынна ытла Германие каторгăна хăваласа кайрĕç. Колхозниксем нумайĕшĕ мĕн май килнĕ таран Германие каясран пăрăнса юлма тăрăшрĕç, пытанса пурăнчĕç. 1944 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче фашистла бандитсем Сергей Тодоровские, Харитон Судома тата Даниил Тодоровские тытрĕç те Германие кайма килĕшменшĕн чĕрренех сунтарса ячĕç. Темиçе кун иртсен, нимĕç ирсĕрĕсем Ксения Орел, Анастасия Перевертень тата ытти колхозницăсене те нумайĕшне персе пăрахрĕç. Вĕсене тăванĕсем Германи каторгине хăваласа каясран пытанса пурăннăшăн персе вĕлерчĕç».

Акт çине çаксем алă пуснă: Петр Перевертень, Иван Симчук, Григорий Лазарчук, Федор Тимошенко, Петр Юрченко.

Çураки ĕçĕсене хăвăртлатар! Сеялкăсемпе тата тракторсемпе туллин усă курар!

1944 ÇУЛТИ МАЙĂН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇУРАКИ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Çуртырисем акнă, иртнĕ çулхи куракĕсем-сĕр пуçне (процентпа)	Вĕсен шутĕнче пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши тырăсем акнă (процентпа)	Нумай çул хушши ÿсекен курăксем акнă (процентпа)
Калинино	31,6	39,9	40,0
Красноармейски	29,3	38,8	39,4
Чурачăк	28,1	31,7	21,9
Елчĕк	27,7	32,0	21,4
Шăхасан	26,2	30,9	25,5
Чкаловски	24,2	29,4	21,1
Комсомольски	19,3	22,7	12.8
Канаш	18,6	24,3	28,7
Вăрнар	18,6	14,5	26,6
Пăрачкав	16,9	20,1	3,6
Çĕрпÿ	16,4	—	33,0
Вăрмар	16,2	19,2	55,3
Шупашкар	14,4	15,2	47,7
Первомайски	13,9	15,0	9,7
Сĕнтĕрвăрри	13,4	16,6	49,2
Сĕнтĕр	12,8	13,3	54,4
Йĕпреç	12,5	15,8	25,0
Шăмăршă	12,1	14,4	33,3
Етĕрне	12,0	—	28,8
Тăвай	11,5	14,3	41,2
Элĕк	11,3	14,3	42,5
Куславкка	10,2	12,7	35,6
Советски	10,1	13,8	47,9
Октябрьски	9,7	12,5	39,0
Ишлей	9,6	—	44,2
Улатăр	8,4	10,7	7,8
Хĕрлĕ Чутай	8,4	—	39,1
Муркаш	8,4	10,1	39,2
Çĕмĕрле	7,9	11,7	13,3
Кувакино	7,3	8,8	2,2
Шупашкар хули	6,7	—	—
Пĕтĕмпе	16,3	17,8	32,2

„Мотор" колхозра ака ĕçне вăраха тăсаççĕ

КАНАШ. (Телефонпа). Вырăскас Пикшикри «Мотор» колхоз çураки ĕçне апрелĕн 25-мĕшĕнче тытăнчĕ. Çак вăхăтрапа пĕтĕмпе те 66 гектар çеç сухаланă, 57 гектар акнă. Колхозăн 3 сеялка пур, анчах вĕсемпе усă курмаççĕ.

Çак колхозра МТС-ăн 3 тракторĕ ĕçлет, вĕсем пурĕ те 30 гектар çеç сухаланă. Тракторист Порфирьев çураки пуçланнăранпа та 12 гектар кăна сухаланă. Майăн 4-мĕшĕнче бензин çуккипе пачах та ĕçлемен. Тракторсен бригадине ертсе пыракан Павлов юлташ лăпкăн: «çак кунсенчех бензин пулать,» — тесе ларать. МТС директорĕ Зайцев юлташ тракторсене ĕçлеттерессишĕн çителĕклĕ ĕçлемест. Тракторсене кунта начар юсанă. Майăн 5-мĕшĕнчен «Мотор» колхозри 3 трактор ĕçлеменнипе пĕрех.

Трактор сеялки ĕçлеменнине пула трактορпа сухаланă хыççăн алăпа акаççĕ, унхыççăн сÿрелеççĕ. Майăн 5-мĕшĕнче колхозра 6-мĕш бригадăра 1 гектар та сухаламан, 1-мĕш бригадăра 1,75 гектар сухаланă. «Мотор» колхозăн пурĕ 427 гектар [illegible] малла, хальхи пек сÿрĕккĕн ĕçлесен ака ĕçĕсем июнь уйăхне çитиччченех тăсăлма пултараççĕ,

«Мотор» колхозра ВКП(б) Чăваш Обкомĕ «Канашпа Красноармейски районсенче ака ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен» йышăннă постановление ячĕшĕн кăна сÿтсе-явнă.

С. ШАДИН.

Северов, Андреев тата Антонов трактористсем çуракинчи задание пурнăçланă

ШĂХАСАН, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне ответлесе, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Паянхи кун тĕлне МТС çураки вăхăтĕнче тумалли ĕçсен планне 35 процент пурнăçланă. Тимофеев юлташ ертсе пыракан 6-мĕш бригада çураки вăхăтĕнчи ĕçсен планне 70 процент, Сергеев юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада 57 процент пурнăçланă. Северов, Андреев тата Антонов трактористсем çураки вăхăтĕнче тумалли ĕçсен планне 100 процентчĕпех тултарнă, çав вăхăтрах 6 процент горючи перекетленĕ.

Фронтовиксен çемьисене пулăшма планран иртте рсе тырпул акса хăварар

Пăрачкав районĕнчи «Красный пахарь» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем нумай пулмасть хăйсен пухăвĕнче фронтовиксен çемьисене пулăшасси çинчен сÿтсе-явнă. Вĕсем фронтовиксен çемьисене пулăшма планран иртте рсе 3 гектар тулă тата 2 гектар вир акса хăварма йышăннă. Çав гектарсем çинчен пухса илнĕ мĕнпур тырпула фронтовиксен çемьисене пулăшмалли районри фонда пама йышăннă.

«Красный пахарь» колхозăн членĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене хăйсен примерĕпе кашни колхозрах фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд валли планран иртте рсе тырпул акса хăварма чĕннĕ.

* * *

Вырăнти партипе совет организацийĕсен колхозниксемпе колхозницăсене «Красный пахарь» колхозăн пуçарăвĕ питех те кирлĕ мероприяти пулса тăни çинчен анлăн ăнлантарса парса, çав паха пуçарăва сарма тăрăшас пулать. Пирĕн яланах çакна асра тытас пулать: фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшасси — пĕтĕм халăх ĕçĕ пулать. Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшни вăл—Хĕрлĕ Çарăшăн тăрăшни.

Вăйлă тырпулшăн ăмăрту сарăлсах пырать

Районри пур колхозсем те çураки ĕçне массăллăн тытăнчĕç. Малта пыракан «Красный бригадир», «Луч», «Балтиец», «Красный Герой» колхозсем тĕштырă акмалли плана 60—70 процента çити пурнăçларĕç.

МТС тракторĕсем те ĕçе пуçăнчĕç. Çак икĕ кун хушшинче кăна тракторсемпе 265 гектар сухаланă. Трактористсемпе трактористкăсем нумайĕшĕ сменăри нормăна иртте рсе тултараççĕ. Трактористкăсем О. Максимова нормăна 154 процент, В. Никитина—157 процент тултараççĕ. Тракторист Громов юлташ сменăри нормăна 140 процент тултарать, Антонов тракторист 7,20 гектар вырăнне 8 гектар сухалать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановленине тата Калинин облаçĕнчи «Красный путиловец» колхоз членĕсем чĕнсе каланине колхозсенчи кашни бригадăрах сÿтсе-явнă. Колхозсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Агротехникăллă мероприятисене колхозсенче ăнăçлă пурнăçлаççĕ. Паянхи кун тĕлне 3,298 центнер сĕрулмине яровизацилеме хывнă, 1248 центнер тĕштырă вăрлăхсене яровизацилененĕ. Кĕрхи калчасене 1562 гектар сÿрелене, 1258 гектар çинче апат панă.

Йышăнас пулать: кĕрхи калчасене апат парасси районри колхозсенче çителĕксĕр пырать-ха.

Акмалли çĕрсене çумкурăксенчен, хăмăлсенчен 349 гектар çинче тасатнă.

Уйрăм колхозсем акан малтанхи кунĕсенче агротехника правилисенчен пăрăнса тĕслĕхсем пулчĕç. Сăмахран, «Ударник», «Малалла» колхозсенче алăпа акма пуçланă.

«Авангард», «Красный флот» тата «Кульмет» колхозсенче ăшăх сухаланă тĕслĕхсем пулнă. «Кульмет» колхозра иртнĕ çул çĕрулми лартнă вырăнтан улма аврисене те тасатмасăрах акма тытăннă. «Авангард» колхозра çак вăхăта çитсе те çĕрулмине тата тĕштырăсене яровизацилеме тытăнман, кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене сÿрелемен, вăрлăхсене имçампа чÿхеме шутламаççĕ те. Колхоз председателĕ Васильев юлташ агротехникăллă мероприятисене пурнăçлассишĕн кирлĕ пек тăрăшмасть.

Çак çитменлĕхсене пĕтерес пирки эпир кирлĕ пек мерăсем йышăнтăмăр. ВКП(б) райкомĕн тата райисполкомăн представителĕсемпе кĕске канашлу туса ирттертĕмĕр. Халĕ кашни колхозрах тата кашни бригадăрах ВКП(б) Обкомĕн Канашпа Красноармейски районĕсем пирки йышăннă постановление ăнлантараççĕ.

Колхозсенче халĕ Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне ăнлантарас тата Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Займне сарас ĕç анлăн пырать.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) Çĕрпÿ райкомĕн секретарĕ.

Нормăсене ытлашшипех тултараççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те çураки ĕçне пуçăнчĕç.

«Трактор» колхоз (председателĕ Т. Иванова юлташ) çак кунсенчех тĕштырăсене акассине вĕçлет. Кунта колхозниксем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Сухаçă Скворцов юлташ кулленхи нормăна 152 процент, А. Николаев — 170 процент, И. Сидоров — 162 процент, Кузьмин — 175 процент тултараççĕ.

«Красный Октябрь» колхозра çураки ĕçĕнче комсомолецсем мухтава тивĕç ĕçлеççĕ. Ольга Никифоровăпа Лидия Волкова комсомолкăсем кунне 1,20 гектар сухалас вырăнне 1,45 гектар сухалаççĕ. Акакансем Орешкин тата М. Григорьев юлташсем кашниех 5 гектар акас вырăнне 7-шер гектар акаççĕ. Вĕсеччен сÿрекенсем те юлмаççĕ. Люба Смирнова 7 гектар сÿрелес вырăнне 9 гектар, Ф. Дмитриев — 8 гектар сÿрелеççĕ.

Смелов бригадин паха ĕçĕсем

Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозри бригадăсем, Калинин облаçĕнчи «Красный путиловец» колхоз членĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн, пурте Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Çак колхозри 1-мĕш бригадăн (бригадирĕ Смелов юлташ) 103 гектар тырă акмалла. Смелов юлташ ертсе пыракан бригада пур ĕçре те малта пырать. Вĕсем кашни гектартан 15 центнертан кая мар тĕштырă, 110 центнер çĕрулми, 200 центнер пахча-çимĕç пухса илме обязательство илчĕç.

Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн кунта ырми-канми ĕçлеççĕ. Ирхине 4 сехетре тытăнаççĕ те каçхине 10 сехетре тин ĕçрен таврăнаççĕ. План тăрăх кунта çуркуннехи ĕçсене 12 ĕç кунĕнче вĕçлеме пăхнă, анчах та колхозниксем 10 кун хушшинче вĕçлеме тăрăшаççĕ. Икĕ кунта 30 гектар акнă та ĕнтĕ. Бригадăри звеносене опытлă колхозниксем ертсе пыраççĕ. 58 çулти колхозник Белков тата Калашниковпа Трофимов колхозниксем ĕç нормине 2 хут иртте рсе тултараççĕ.

Уйрăмăнах Зоя Трофимова ертсе пыракан звено ĕçре малта пырать. Колхозницăсем, ака ĕçĕнчи лашасене чăрмантарас мар тесе, кĕрхи калчасене тимĕр шăллă кĕреплесемпе сÿрелеççĕ. Çак майпа 12 гектар çинчи кĕрхи калчасене сÿреленĕ те ĕнтĕ. Колхозниксене икĕ хутчен уйрах апат çитереççĕ. Халĕ кĕр калчисене сÿреленипе пĕрлех апат та параççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

АГРОТЕХНИКĂНА ПĂСАÇÇĔ

СĔНТĔР. Майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Фрунзе ячĕпе тăракан колхоз çуракине пуçăннăранпа чылай вăхăт иртрĕ, анчах апла пулин те унта ака ĕçĕ сÿрĕккĕн пырать-ха. 5 гектар çĕре çуракин малтанхи кунĕнчех тракторпа сухаланăччĕ, анчах, çав участока—майăн 5-мĕшĕччене сÿрелемен. Кунта агротехникăна тÿрремĕнех пăсаççĕ. Сеялкăсем пур пулин те, сĕлле алăпа акса хăварнă. Çакна пула кунта сĕлĕ вăрлăхĕсем çиелтех выртаççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра та ака ĕçне япăх организациленĕ. Кунта кашни сухаçă участоксем уйăрса паман, колхозниксем ушкăнпа сухалаççĕ, çакна пула кунта сухаçăсем ĕç нормине тултараймаççĕ.

Уйрăм колхозсенче ăшăх сухалаççĕ. Сăмахран, «Заря» колхозри сухаçăсем 6 сантиметр тарăнăш çеç сухалаççĕ.

Çак йăнăшсене çийĕнчех пĕтерес пулать.

Мих. ШАШКАРСКИЙ.

* * *

ИШЛЕЙ. Майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Крупская ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Афанасьев), «Красное знамя» колхозра (председателĕ Лебедев юлташ) тата «Ишлей» колхозра (председателĕ Волков юлташ) çак вăхăта çитсе те ака ĕçне кирлĕ пек туса пымаççĕ.

— Çĕр типсе çитмен-ха, лашасем вăйсăр,—тесе лараççĕ. Çав сăлтавсемпех Сĕнъял, Хачăк колхозĕсенче ăшăх сухалаççĕ тата сеялкăсем пур çинчех алăпа акаççĕ.

Çуракин ответлă тапхăрĕ çитрĕ. Кашни сехет хаклă. Çуракинчи çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Совет Союзне Уругвай посланникĕ Э. Фругони господин килни

Майăн 4-мĕшĕнче Мускава Уругвайăн Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ Эмилис Фругони господин килнĕ.

Центральнăй аэродромра Э. Фругони господина СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ хирĕç тухса кĕтсе илнĕ

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 5-мĕшĕнче союзниксен самолечĕсен пысăках мар соединенийĕсем тăшманăн Франципри объекчĕсене атакăланă.

Иккĕмĕш тактикăллă авиаци корпусĕнчи акăлчансен, австриецсен тата çĕнĕ зеландецсен «Москито» йышши самолечĕсем майăн 6-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Çурçĕр Франципри çар объекчĕсене тапăннă.

АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 7-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши самолечĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем, питĕ йышлă истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Берлинри тата Германин ытти пункчĕсенчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем Черногорире, Герцеговинăра, Славонире тата Санджакра çаплах малалла наступлени туса пынă.

Хĕвеланăç Боснире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем Марконич-град хулине çавăрса илнĕ те хулана темиçе енчен штурмлама тытăннă. Тăшман хытă хирĕç тăрса çапăçать.

Тăшман Жумберакра наступлени пуçласа янă. 6 кун хушши хытă çапăçнă хыççăн тăшман наступленийĕ путланса ларнă. Йывăр çухатусем тÿснĕ хыççăн гитлеровецсемпе усташасем каялла чакнă.

БРАЗИЛИ БАНКĔ ЮГОСЛАВИН КАИРТИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЮГОСЛАВИ ВКЛАЧĔСЕНЕ ПАМА КИЛĔШМЕН

НЬЮ-ЙОРК, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Бразилин наци банкĕ Югославин Каирти правительствине Югослави фончĕсенчен 9,5 миллион доллар укçа пама килĕшмен. Агентство çакна палăртса парать: çапла туни вăл Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет ют çĕршывсенчи банксене Югослави наци банкĕн вклачĕсене Каирти правительствăна пама чарăнма ыйтнине пĕрремĕш хут пурнăçлани пулать.

Кĕскен

● Нью-Йоркри верьфра Америкăн «Боном Ришар» ятлă çĕнĕ авионосецне шыва кăларса янă. Çав авионосец 27.000 тонна таять. Вăл юлашки икĕ çул хушшинче тунă 13-мĕш авионосец пулса тăрать. Авионосец çинче 80 самолета яхăн вырнаçма пултарать

● Ганди сывлăхĕ начар пулнă пирки, Инди правительстви ăна тĕрмерен кăлармалла тунă. Ганди тĕрмере 1942 çулхи августранпа ларать, ăна «влаçа гражданла хирĕç тăма кампани тунăшăн» хупнă пулнă. (ТАСС).

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС АВИАЦИЙĔ РУМЫНИН ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАТА БУХАРЕСТ ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ягарласа пĕлтернĕ тăрăх, фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче тăшманпа пысăках мар тытăçусем пула-пула иртнĕ.

Ĕнер союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем Плоештири тата Турну Северинри (Румыни) сортировка станцийĕсене тапăннă. Çавăн пекех тата тăшманăн Подгорицри (Югослави) çарĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Иртнĕ çĕр вăтам бомбардировщиксем румынсен Кымпинăри сортировка станцине тапăннă.

Çав вăхăтрах тăшманăн Италири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Майăн 5-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Центральнăй Италире Пескара шывĕ çинчи пысăк пĕвене ишсе антарнă. Пескара хули патнелле вăйлă шыв кĕрлесе кайнă.

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС. Паян ирхине Акăлчан бомбардировщикĕсем каллех Плоештири сортировка станцине тата Кымпинăри нефтехранилищĕне тапăннă. Плоештие ĕнер тапăннă чухне сортировка станцийĕсĕр пуçне нефть тасатакан заводсене те сиенленĕ тесе шутлаççĕ. Тăшман хула çийĕнче хытă хирĕç тăрса çапăçнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшман истребителĕсене нумай персе ÿкернĕ.

ЛОНДОН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: тăшман американецсен 5-мĕш армийĕн кĕпер умĕнчи укрепленийĕсене тата Гарильяно шывĕн тури тăрăхĕнчи улăхра атакăсем тунă. Атакăсене пурне те сирсе янă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем кĕрешнĕ тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă.

Ĕнер союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕнчи йывăр бомбардировщиксен питĕ пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Румынин Брайлов, Турну-Северин, Питешти, Крайова тата Кымпина чугун çул узелĕсене ăнăçлă тапăннă. Иртнĕ çĕр йывăр тата вăтам бомбардировщиксем Бухарест çине бомбăсем пăрахнă.

НИМĔÇ КАРАПĔСЕМ ХĂЙСЕН БАЗИСЕНЕ РУМЫНИ ПОРЧĔСЕНЧЕН БОЛГАРИ ПОРЧĔСЕНЕ КУÇАРНИ

СТАМБУЛ, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарирен пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа нимĕç карапĕсемпе подводнăй лодкисем хăйсен базисене Румыни порчĕсенчен Болгари порчĕсене —Варнăна тата ытти портсене куçарма пуçланă.

София хулинче юлашки кунсенче нимĕçсем уйрăмах хытă ĕçлеме тытăннă. Баяпра тата кÿршĕри ытти ялсенче нимĕçсем васкасах бараксем тăваççĕ. Софияра сывлăшран бомбăсем пăрахса сиенленĕ çуртсене нимĕçсем ишĕлчĕкрен тасатса юсама тытăннă.

СТЕТТИНИУС КАЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государственнăй секретарĕн заместителĕ Стеттиниус Лондонран таврăнсан пресс-конференцире çапла каланă: Лондонра Англин государство деятелĕсемпе каласнă чухне эпир ăлĕкрех США-па Англие хытă шухăшлаттарнă йышлă ыйтăва ик енĕшĕн те кăмăллă пулмалла татса патăмăр. Акăлчансем пирĕнпе килĕштерсе ĕçлеме питĕ тăрăшрĕç. Стеттиниус «Черчилльпе çав тери ăнăçлă калаçни» çинчен питĕ савăнса каланă. Стеттиниус малалла çапла каланă: нимĕнле йывăрлăх та, нимĕнле чăрмав та пулман тата пур ыйтусене те татса панă, тесе каласшăн мар эпĕ. Анчах калаçусем çĕр процентчĕпех ăнăçайман пулин те, эпĕ Лондонран кăмăллă пулса таврăнтăм.

Çуркунне улмуççисемпе çырла тĕмĕсене мĕнле лартмалла

Çимĕç йывăççисене çуркунне иртерех, папакĕсем сарăлма тытăниччен лартмалла. Кая юлса лартсан, çанталăк ăшă тăнă май, йывăçăн сĕткенĕ нумай çухалать, çав вăхăтрах тымарсем, тăпрапа лайăх сыпăнайман пирки, унтан апат илеймеççĕ, çавăнпа та типсе хăрма пултараççĕ. Май чухлĕ иртерех лартнăран, çавăн чухлĕ лайăхрах, йывăç вăрра иртерех ÿсме тытăнать тата çĕрпе лайăх çыхăнать.

Сад пахчи тунă чухне улмуççи кăна лартмалла мар, кĕске вăхăтра çимĕç паракан çырла, слива йывăççисене тата çĕрçырли, хурлăхан, хăмлаçырли те лартмалла. Çак çырла тĕмĕсем пирĕн çĕр çинче тата пирĕн çанталăкра лайăх çитĕнеççĕ.

Уйрăмах хăвăрт çитĕнсе çимĕç паракан «Виктория» текен çĕрçырлине ытларах лартмалла. Унăн тĕмĕсем лартнă хыççăн иккĕмĕш çулĕнчех çимĕç пáраççĕ. Çĕрçырлине кашни колхозра кăна мар, кашни колхозникĕн, рабочин, служащин пахчине тата учрежденисемпе подсобнăй хуçалăхсен çĕрĕсем çине те лартмалла.

Иртнĕ çулсенче, сивĕ хĕлсем пулнипе, нумайĕр улмуççисем тата çырла тĕмĕсем сивве чăтаймасăр пĕтрĕç. Çавăнпа та çимĕç паракан йывăççене лартнă чухне сивве чăтакаписене суйласа лартма тăрăшмалла.

Улмуççине лартнă чухне çак сортсене суйласа лартмалла: «Антоновка», «Анис серый», «Пепин Шафранный» (çак сортсен çимĕçĕсене хĕллене хăварма пулать); «Анис алый», «Коричное полосатое», «Боровинка», «Осеннее полосатое», «Бельфлет китайка» (кусем — кĕрkуннехи сортсем); «Грушовка Московская», «Папировка», «Коробовка» (ку сортсем—çуллахи сортсем).

Грушăсенчен çак сортсене лартсан аван: «Бессемянка» тата «Тонковетка»; çырла йывăççисене — «Владимирская», «Красная плакучая» «Плодородная Мичурина» ятлисене; слива йывăççисене—«Местная синяя» ятлине; çĕрçырлисене: —«Рощинская», «Коралка», «Саксонка», «Лунза» ятлисене; хурлăхана — «Неаполитанская», «Лия плодородная» ятлисене; крыжовнике—«Финик зеленый» текеннине; хăмлаçырлине — «Мальборо», «Усанка» ятлă сортсене лартас пулать.

Пирĕн республикăри питомниксенче çак сорт йывăççем çителĕклĕ.

Колхозсен сад пахчисенче улмуççисемпе груша йывăççисене уйрăм йĕркесемпе лартмалла. Слива йывăççисемпе çырла тĕмĕсене улмуççисен речĕсем хушшине лартма юрать, унта вĕсем 10—12 çул хушши ÿсе çимĕç пама пултараççĕ.

Йывăççене лартнă чухне çакăн пек лартмалла (метрпа шутласа):

	Сад пахчисенче	Кил вырăнсенче
Улмуççисене	8×8	6×6
Грушăна	8×6	6×6
Çырла йывăççисене	4×4	3×3
Сливăна	3×3	2×2
Хура хурлăхан тĕмне	2×1,25	2×1
Хĕрлĕ тата шурă хурлăхана	2×1	2×1
Крыжовнике	2×1,25	2×1
Хăмлаçырлине	2×0,75	1×0,5

Çĕрçырлине икĕ йĕркепе, йĕркисен хушшине 30 сантиметр хăварса лартмалла, йăрана лартнă чухне йăрансен сарлакăшĕ 1 метр пулмалла. Улмуççин тата груша йывăççисен лартмалли тĕпĕсем 2 çултан çамрăк пулмалла мар. Вĕсен тунинче 5—6 турат пулмалла, 3—4 йÿплĕ 30—35 сантиметр тăршшĕ суранланман тымарсем пулмалла. Çырла тĕмĕсен тымарĕсем 15—20 сантиметр тăршшĕ тата нумай вак тымарлă пулмалла, çĕр çырли тĕмĕсем пĕр çул ÿсĕскерсем пулмалла, тымарĕсен тăршшĕ 5 сантиметртан кая пулмалла мар, çĕр çинчи калчин 2—3 çулçă пулмалла, тăррине пачмар папак пулмалла.

Сад пахчи валли уйăрнă участока лайăх карта тытса тухмалла е ун тавра тарăн канав алтмалла. Сад пахчине çилсенчен хÿтĕлемешкĕн унăн хĕррине акаци, вĕрене, чăрăш, çăка, тополь е ытти йывăççем лартса тухмалла.

Сад пахчи лартмалли участока 30—35 сантиметр тарăнăш сухаламалла, гектар çине 60 тоннăна яхăн тислĕк тăкмалла.

Колхозниксемпе служащисен сад пахчи лартмалли вырăна тимĕр кĕреçепе тарăн алтса кăпăшкалатмалла, 300—400 тăваткăл метр пысăкăш участок çине 10—15 центнер тислĕк тăкмалла.

Улмуççисемпе груша йывăççисене çаврака шăтăк алтса лартмалла, вăл шăтăксен тарăнăшĕ 50—60 сантиметр, сарлакăшĕ 100—120 сантиметр пулмалла; çырла тата слива йывăççисене лартма шăтăкăн тарăнăшне 40—50 сантиметр, сарлакăшĕ 60—70 сантиметр тумалла, хурлăханпа крыжовник валли 40 сантиметр тарăнăш, 50 сантиметр сарлакĕш шăтăк алтмалла, хăмла çырли валли 30 сантиметр тарăнăш, 30 сантиметр сарлакĕш шăтăк алтмалла.

Йывăççене лартас умĕн тĕплĕн тĕрĕслес пулать. Шăшисем кышласа сиенленĕ е хăмăрланма тытăннă йывăççене лартас пулмасть. Çĕрнĕ е сиенленнĕ тымарсене чĕрĕ вырăна çитиччен касса пăрахмалла. Йывăççене иккĕн лартаççĕ. Лартас умĕн йывăç тымарĕсене тăпрапа ирĕлтерсе тунă шĕвек çине чиксе илмелле. Шăтăк тĕпне çĕрĕн çиелти сийне тата çĕрнĕ тислĕк хумалла. Шăтăкра пĕчĕк тĕме пулмалла, çав тĕме çине йывăç тымарне пĕр тикĕс пур еннелле те сарса лартмалла. Йывăçăн тымарĕсем пуçланса каякан вырăн çĕрпе шай пулмалла.

Хурлăханпа крыжовнике питомникре ларниччен 5—7 сантиметр тарăнтарах лартмалла, хăмлаçырлине питомникре мĕнле лартнă, çавăн пекех лартмалла. Çĕрçырлине лартнă чухне унăн папаккине çĕрпе витме юрамасть, ытла тарăн е ăшăх лартни те сиенлĕ.

Йывăççене лартнă чухне тымарĕсене кăпăш тăпрапа, çĕрĕн çиелти сийĕпе витмелле. Çавăнпа та шăтăк алтнă чухне çĕрĕн çиелти сийне уйрăм хумалла. Йывăçăн тымарне витнĕ хыççăн шăтăкри тăпрана лайăх таптамалла, вара шăтăка йăлтах тултармалла. Шăтăка тăпрапа тултарнă чухне йывăç тĕпĕ тавра пысăках мар лупашка тумалла. Кашни йывăç тĕпне икĕ витререн кая мар шыв сапмалла. Шыв сапнă хыççăн çав лупашкана 10 сантиметр хулăмĕш тислĕк хумалла. Лартнă çамрăк йывăççене шалчасем çумне мунчалапа çыхса хумалла тата вĕсен турачĕсене иртмелле. Улмуççипе груша йывăççин турачĕсене хăйсен тăрăшĕн виççĕмĕш пайĕ чухлĕ касса пăрахмалла, йывăçăн тĕп тунине те касмалла, анчах та ăна аяккинчи турачĕсенчен 10—15 сантиметр вăрăмрах хăвармалла. Туратсен тăррисене çивчĕ çĕçĕпе иртмелле, вĕсене шал еннелле чалăш касмалла.

Хăмла çырли йывăççин тунисене 30—35 сантиметр тăршшĕнчен ытла хăвармалла мар, хурлăхан тата крыжовник тунисене тĕпĕнчен 12—15 сантиметр тăршшĕ хăвармалла.

Лартнă йывăççене тата çырла тĕмĕсене çу каçиччченех, уйăхне 2—3 хутчен шыв сапмалла, тĕрлĕ çумкурăксенчен тасатмалла тата йăран хушшисене кăпăшкалантарса тăмалла. Çавăн пекех йывăç чирĕсемпе тата йывăça сиен кÿрекен хурткăпшанкăсемпе кĕрешмелле.

Р. ОСАНОВ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн пахча-çимĕç управленийĕн начальникĕ.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăвакане П. Н. НИКОЛАЕВ.

СССР Госпланĕн ЦСУ-н Горькири вĕренÿ комбиначĕн Шупашкарти филиалĕ промышленноçра ĕçлекен счетоводсене кĕске вăхăтра вĕрентсе кăлармалли отделение вĕренме илет.

Вĕренме кĕрекенсен вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлмелле.

Отделенире учрежденире ĕçлеме пăрахмасăр 3 уйăх вĕренмелле. Вĕреннĕшĕн укçа илеççĕ.

Заявленисене майăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ, майăн 25-мĕшĕнчен пуçласа вара вĕрентме тытăнаççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, Канашская, 21,

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 03124 Типографи №1, Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз